# Çĕнтерӳ ялавĕ

Муркаш район хаçачĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнченпе тухать

104 (7421) № * Шăмат кун, 2006 çулхи декабрĕн (раштав) 9-мĕшĕ * Хакĕ ирĕклĕ


## Декабрĕн 12-мĕшĕ – РФ Конституцийĕн кунĕ

**ХИСЕПЛĔ ЕНТЕШĔМĔРСЕМ!**

Сире пурне те çывхарса килекен патшалăх уявĕ – РФ Конституцийĕн кунĕ ячĕпе саламлатăп!

Çĕнĕ Конституци Раççей Федерацийĕн республика формипе тытса пыракан демократиллĕ федерациллĕ право патшалăхĕн тĕслĕхĕ, çын, унăн прависемпе ирĕклĕхĕсен гаранчĕ пулса тăрать, гражданла мирпе килĕшĕве çирĕплетет, çынпа общество, патшалăх хушшинчи хутшăнусене йĕркелесе пырать.

Халăх хăйĕн влаçне тӳреммĕн хăй суйланă патшалăх влаçĕн е вырăнти хăйтытăмлăх органĕсем урлă туса пырать. Референдумсемпе ирĕклĕ суйлавсем халăхăн пысăк влаçне палăртаççĕ.

Çĕнĕ Конституцие йышăннăранпа иртнĕ 12 çул хушшинче çĕршывра пурнăç палăрмаллах улшăнчĕ. Влаçăн пур шайне те халĕ халăхăн суйлама май пур. Тен, пур чухне те вĕсен ĕçĕ пире тивĕçтермест те пулĕ. Çитменлĕхсемпе йăнăшсем те çук мар. Демократиллĕ аталану çулĕ çăмăлах маррине кăтартса парать çакă. Пирĕнтен кашниех çакна лайăх пĕлет: пĕр-пĕрне ăнланса, пурте пĕр тĕллевпе вăй хурсан, эпир аталану çулĕпе çирĕппĕн малалла утăпăр. Çакна шанса, пĕлсе тăратпăр: пирĕн халăх малашлăха ĕненсе, пур йывăрлăхсене те парăнтарĕ, вĕсен умĕнче çухалса каймĕ.

Сире пурне те килĕшӳ, тату пурнăç, çирĕп кăмăл, ырлăх-сывлăх сунатăп.

**Район пуçлăхĕ Ю.А. ИВАНОВ.**

## Кĕскен

### Сенаторсене суйламалла тăвасшăн

Сергей Миронов ертсе пыракан Федераци Совечĕн членĕсене суйламалла тăвасшăн. Кун пирки унăн ертӳçи хăй те каланăччĕ. Халĕ ку шухăша Патшалăх Думи те ырлама хатĕр.

Хальхи Федераци Совечĕ Раççей çыннисен интересĕсене туллин палăртаймасть. Хайхи сенаторсенчен ытларахăшĕ Мускав çыннисем тата ĕнерхи бизнесменсем.

### Чикĕ леш енчен рис туянмаççĕ

Ытлари кунран Россельхознадзор ют çĕршывсенчен рис туянма чарнă. Сăлтавĕ – санитари нормисене пăсни. Кӳрсе килекен рисра пестицид тупса палăртнă. Кун пек чару пур çĕршывсене те пырса тивет. Риса США-ран туянма сентябрĕн 29-мĕшĕнчех чарнă пулнă.

## Коллективра хисепре



*Галина Георгиевна Соколова Çĕнĕ Шупашкарти гигиенăпа эпидемиологи центрĕн районти пайĕн эпидемиологи врачĕ пулса вăй хурать. Тĕрлĕ канаш, пулăшу ыйтма килекенсемпе вăл яланах таравать, ĕçне пĕлсе пурнăçлать. Çавăнпа та халăх хушшинче те, коллективра та хисепре.*

## Правительствăра

### Килти хушма хуçалăха аталантарма çăмăллăхлă кредитсем ытларах пулаççĕ

Тунти кун Чăваш Республикин Президенчĕ Николай Федоров тунти кунсенче йăлана кĕнĕ йĕркепе Министрсен Кабинечĕн членĕсемпе тата федераци ведомствисен территорири органĕсен ертӳçисемпе канашлу ирттернĕ.

Раштав уйăхĕн 2-мĕшĕнче Екатеринбургра "Пĕрлĕхлĕ Раççей" партин VII съезчĕ пулса иртнĕ. Унăн ĕçне республика пуçлăхĕ Николай Федоров хутшăннă. Парти форумĕн делегачĕсем Николай Федорова "Пĕрлĕхлĕ Раççей" партин Аслă канашĕн йышне суйланă.

Екатеринбургра Николай Федоров федераци министрĕсемпе тĕл пулнă, Чăваш Республикин социаллă пурнăçĕпе экономика аталанăвĕн çивĕч ыйтăвĕсене сӳтсе явнă. Ял хуçалăх министрĕ, "Пĕрлĕхлĕ Раççей" партин Аслă канашĕн членĕ Алексей Гордеев Николай Федоровпа калаçнă хушăра Чăваш ял хуçалăх академийĕн механизаци факультечĕн çуртне туса пĕтерме укçа-тенкĕпе васкавлăн тивĕçтерме хатĕр пулнине çирĕплетнĕ. Республика Президенчĕ Ял хуçалăх министерствине, Хула тăвас ĕç тата общество инфратытăмĕн аталанăвĕн министерствине çак корпуса çитес вĕренӳ çулĕн пуçламăшĕ тĕлне хута ямалли майсене хаклама хушнă.

(Вĕçĕ 5-мĕш стр.).

## Потребкоопераци юхăмĕ Раççейре 175, Чăваш Енте 110 çул тултарчĕ

### Президент саламларĕ

Çак кунсенче Шупашкарта К. Иванов ячĕллĕ Чăваш Патшалăх академи драма театрĕнче Раççейри кооперации юхăмĕ 175, Чăваш Енти кооперации юхăмĕ 110 çул тултарнине халалланă уяв иртрĕ.

Чăваш Республикин Президенчĕ Н.В. Федоров асăннă системăра тăрăшса вăй хуракансене чысларĕ. Ырă ята тивĕçекенсем хушшинче пирĕн район çыннисем те пулчĕç. Мăн Сĕнтĕр райповĕн тĕп бухгалтерĕ Н.М. Сорокина тата районăн хисеплĕ çынни В.С. Краснов "За вклад в потребкооперацию Российской Федерации" ордена тивĕç пулчĕç.

Николай Васильевич хăйĕн ятĕнчен те нумай ĕçчене Тав çырăвĕсем парса чыс турĕ. Чи малтан вара çак тĕллевпе сцена çине "Сундырь-Хлеб" чикĕллĕ яваплăхлă обществăн мастер-пекарьне З. А. Якутовăна чĕнчĕ. Çакна палăртмалла. Якутовсен асăннă предприятири ĕç династийĕ 58 çулпа танлашать. Ăна пуçласа яраканĕ Зинаида Александровнан хунямăшĕ Фекла Якутова пулнă. Паян Зинаида Якутован хĕрĕ кунта бухгалтерта ĕçлет, ывăлĕ те 3 çул çак предприятире ĕçлерĕ.

Президентăн Тав çырăвĕ коллективри авторитетлă З.А. Якутовăшăн пысăк парне пулчĕ. 1973 çултанпах çак предприятире ĕçленĕ хушăра Зинаида Александровна 1990 çулта "Потребкоопераци отличникĕ" ята çĕнсе илчĕ. 1998 çулта Чăвашпотребсоюзăн Хисеп Грамотине тивĕçрĕ. Тепĕр çулхине "ЧР потребкоопераци ветеранĕ" ята çĕнсе илчĕ. 2002 çулта вара "РФ потребкооперацинче тӳрĕ чунпа ĕçленĕшĕн" паллăна тивĕçрĕ.

**Л. ПАВЛОВА.**

## Мĕн хак тăрать çын пурнăçĕ?

# Е çынлăха çухатас марччĕ...

Нумаях пулмасть район пуçлăхĕ Ю.А. Иванов районта право йĕркине пăсассине хирĕç профилактика ĕçĕсем ирттерессипе ĕçлекен тата çул çитмен çамрăксемпе вĕсен прависене хӳтĕлессипе ĕçлекен комиссисен черетлĕ ларăвне ирттерчĕ. Ларура пĕтĕмпе виçĕ ыйту пăхса тухрĕç. Эрех ĕçессине тата алкоголизма хирĕç, алкоголь продукцине саккуна пăсса сутассине хирĕç ĕçлени çинчен. Çул çитмен çамрăксем хушшинче право йĕркине пăсассинчен профилактика ĕçĕсем ирттерესси тата тивĕçлĕ мерăсем йышăнасси епле пулса пыни. Право йĕркине сыхлассипе обществăлла хăрушсăрлăхпа тивĕçтерессине, право йĕркине пăсассинчен сыхлас ĕçе общественноçа явăçтарасси.

Асăрхарăр пулĕ, виçĕ ыйтăвĕ те пĕр-пĕринпе тачă çыхăннă. Кашни ыйтăвĕнче пĕтĕм инкек, йĕркесĕрлĕх çăл куçĕ эрех пулса тăрать. Çакна паян ăнланман çын çук та пулĕ. Ăнланатпăр. Çав хушăрах ача çуралнă кунĕнчен пуçласа çынна юлашки çула ăсатнине те эрехпе паллă тăваççĕ, ăнланатпăр. Паллах, халиччен пынă йăлайĕрке палăрăмĕ те пур пулĕ кунта. Пĕр самантрах ăна чĕрсе тăкма, пăрахăçлама та çук пулĕ. Картне, чиккине пĕлмелле. Çакна пĕлменнипех ĕнтĕ çын хăех тĕпсĕр тарăн çырманалла анать. Хăй çеç-и? Çемйин пурнăçне те тамăка кĕртсе ӳкерет вăл.

Ноябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне районти тĕп больницăри наркологи пӳлĕмĕнче 1070ĕн учетра тăраççĕ, вĕсенчен 148 – хĕрарăмсем. Кăçал кăна эрех серепине кĕрсе ӳкнĕ 73 çынна тупса палăртнă, вĕсенчен 13-шĕ – хĕрарăмсем. Кам калама пултарать паян çак çемьесенчи ачасем кашни ире телейлĕ кулăпа кĕтсе илет тесе. Çак ĕçекен ашшĕ-амăшĕсем паян хăйсем те ачисене мĕн пĕçерсе çитерессине калаймаççĕ пулсан, вĕсен шăпи мĕнле килсе тухасси пирки кам тăрăшĕ? Ялта эрех сутакансем-и? Вĕсем çак пăтранчăк шĕвеке туянма пыракансенчен юлашки хырса тултарнă çăнăхне те илсе юлаççĕ. Ачисене ăшă çăкăр илсе памасăр тăсакан алăсенчен эрехшĕн юлашки укçине илсе юлаççĕ.

Кунта манăн сире пĕр тĕслĕх илсе кăтартас килет.

Кӳршĕре вылякан хĕрачасене ашшĕ килне чĕнсе кайрĕ. Ача ачах-çке. Хăйсенчен пĕр-ик кил урлă пурăнакан юлташĕсем хыççăн тепĕр 5 минутранах чупрĕ ман пĕлĕшĕн хĕрачи. Анчах та вăхăт нумаях та иртмерĕ – 5 çулхи хĕрача ĕсĕклесе йĕрсе таврăнчĕ юлташĕсен килĕнчен.

– Мĕн, ӳкрĕн-и, ыраттартăн-и? – хыпкаланса ӳкрĕ амăшĕ.

– Вĕсем торт çиеççĕ. Мана пăртак та памарĕç, – аран-аран ăнлантарчĕ пĕр чарăнайми йĕрекен хĕрача. Амăшĕ лăш! сывласа ячĕ.

– Ан кулян, халех магазина кайăпăр та торт илсе килĕпĕр, – терĕ.

Çак ӳкерчĕке сăнаса куçри куççуль пыра ларчĕ. Хăйсен ачисемпе пĕрле вылякан ачашăн пĕр тăваткал сантиметр чухлĕ те пулин пĕр ачин татăкĕнчен касса панă пулсан, çак ача та çапла макăрмастчĕ. Çукка юлнă пулĕччĕç-ши тата вĕсем çакăншăн. Паллах, çук. Ĕçĕ кунта урăххинче. Хытсах пырать иккен çынсен чунĕ. Эпир вара эрех сутакан хăйĕнчен çав "симĕс çĕлене" туянакансен ачисене хĕрхенессе кĕтетпĕр. Ку ачан хуйхине амăшĕ çийĕнчех пысăк торт туянса пусарчĕ. Анчах та çӳлерех асăннă çемьесенче паян миçе ача çиес килнине çисе кураймасть? Çавăн чухлĕ çемьере кăна-ши çак инкек пӳртĕн кашни кĕтессинче пытаннă? Çӳлерех асăннă кăтартусем пурте эрех ĕçсе аптранипе больница койки çине лексе учета лекнисем. Унтах çитейменнисем, час-часах хуйха эрехпе пусаракансем тата мĕн чухлĕ? Учетра тăман эрех ытамĕнчи арçынсемпе хĕрарăмсем? Ярапайкасси тăрăхĕнчи пăтранчăк шыва сутакан 14 çынна хумхантарать-ши хăйсем эрех мар, инкекпе куççуле кĕлентене хупса парса яни? Вилĕм ярса пани? Районти шалти ĕçсен пайĕнче тĕрлĕ спирт пур шĕвеке сутакан учетра тăракан 126 çынна хăйсен "клиенчĕсен" çемйисенчи ахăрсамана савăнтарать çеç пуль çав. Вĕсемшĕн пулсан, укçа килтĕр.

Кăçалхи 10 уйăхра кăна этил спирчĕпе 20ĕн (пĕлтĕр – 18) наркăмăшланнă. Тĕрлĕ суррогата ĕçсе вилĕм алăкĕ патне пынă 28 (пĕлтĕр – 11) çынна больницăра çăлнă. 35-шне вара (пĕлтĕр 40-ĕне) çăлма май килмерĕ. Çакă килте эрех сутаканăн чĕрин пĕр хĕлĕхне те пулин туртса ыраттарать-и? Ун пек пулнă пулсан, ку чыс кӳрмен "ĕçпе" аппаланман пулĕччĕç.

(Вĕçĕ 6-мĕш стр.).

**Ялсенче спирт пур шĕвек сутакансене, антисептин тата спирт пур ытти шĕвеке сутакан тĕрлĕ аптекăсен, çав аптекăсем вырнаçнă предприятисен ертӳçисене**

**ЧĔНСĔ КАЛАНИ**

**Малтанхи утăма эсир тăвасса шанатпăр**

**Юлашки вăхăтра çынсем эрех-сăрапа енне иленни çине ниепле те лăпкăн пăхса тăма çук. Эрехсĕр пуçне тĕрлĕрен спирт пур шĕвеке те тиркемеççĕ вĕсем. Мĕн чухлĕ çыннăн пурнăçĕ вăхăтсăр татăлать паян çак сăлтава пула. Ӳсĕрле тунă преступленисен йышĕ те ӳссех пырать. Çак сиенлĕ йăлана пула паян ашшĕ-амăшĕ чĕрĕ-сывă çĕртех мĕн чухлĕ ача вĕсен ăшшине туймасăр ӳсет. Çапла майпа вĕсен психики пĕчĕкренех аманса юлать. Паянхи хăвăрт улшăнакан пурнăçра хăйсен вырăнне тупĕç-ши вĕсем? Акă, мĕн канăç памасть паян пире. Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинче хăйсен юнĕпе чӳхесе тасатса парнелерĕç çĕршывăн ывăл-хĕрĕсем паянхи телейлĕ пурнăçа. Анчах мирлĕ вăхăтрах эрехе пула пĕр вĕçĕм пурнăç татăлать, арканать пулсан, мĕн патне пырса тухăпăр малалла?**

**Паян ялсенче килсеренех саккуна пăсса сăмакун, спирт сутаççĕ. Çапла майпа пĕр ял çыннисемех пĕр-пĕрне сиен кӳреççĕ, пĕр-пĕрин пурнăçне аркатаççĕ. Аслă Отечественнăй вăрçăра ют çĕршыв салтакĕсем те пирĕн çĕршывăмăршăн тăшманпа кар тăрса кĕрешнĕ пулсан, паян тăвансемех (пĕр ялта пурăнакансем тăван пек пĕр-пĕрне ыр сунса пурăнмалла вĕт-ха) пĕр-пĕрне укçалла инкек кӳнине мĕнле ăнланмалла? Мĕн тесен те, этем тивĕçĕ пирки манас марччĕ. Курмастăр-им, асăрхамастăр-им эсир тăвакан çак утăм çитĕнекен ăрушăн япăх тĕслĕх пулнине, эрехсăра çамрăксен пурнăçне сăрхăнса кĕнине? Эсир çак чыс кӳмен "ĕçпе" аппаланма пăрахасса, çак утăма эсир малтан тăвасса кĕтетпĕр тата шанатпăр, сирĕнтен çапла тума ыйтатпăр.**

**Çак чуна ыраттаракан чăнлăхра сывлăха сыхлас ĕçпе çыхăннă учрежденисенче ĕçлекенсем те айккинче юлманнине мĕнле ăнланмалла тата? Пурнăçа мала хума сăмах панă шур халатлă сывлăх хуралçисем çынсене инкеке кĕртсе ӳкерекен шĕвеке сутнипе кам-ха килĕшĕ? Ытларахăшĕ ĕçме туяннине пĕлсех хăш-пĕр аптекăсенче антисептина тата спирт пур ытти шĕвеке нумайшар парса яраççĕ. Шел пулин те, çак шĕвеке сутма чаракан саккунсем хальлĕхе çук. Апла пулин те эпир сирĕнте чыс, тивĕç туйăмĕ малта пуласса шанатпăр. Çак шĕвеке аптекăсенче сутма чарма ыйтатпăр. Аптекăна яланах çынсем хавшанă сывлăха сиплеме пулăшакан эмелсем патне килнĕ. Малалла та çаплах пултăрччĕ вăл. Ку вара хальхи вăхăтра сирĕнтен те нумай килет. Кирек хăш шайри суйлавра та депутат пулма хатĕрленекенсем халăх пурнăçне лайăхлатма шантараççĕ. Хăй вăхăтĕнче суйлавçăсем умĕнче сирĕнтен хăшĕ-пĕри те çапла тума сăмах панă. Çакна халĕ шăпах конкретлă ĕçпе çирĕплетме вăхăт. Эсир çапла тăвасса эпир шанатпăр, аптекăсенче антисептин тата спирт пур ытти шĕвеке сутма чарăнма ыйтатпăр.**

**Районти ветерансен, хĕрарăмсен, инвалидсен канашĕсем.**

## Официально

**РЕКОМЕНДАЦИИ УЧАСТНИКОВ ПУБЛИЧНЫХ СЛУШАНИЙ ПО ПРОЕКТАМ БЮДЖЕТОВ СЕЛЬСКИХ ПОСЕЛЕНИЙ МОРГАУШСКОГО РАЙОНА НА 2007 ГОД**

1. Одобрить проекты бюджетов Большесундырского, Орининского, Сятракасинского, Хорнойского, Чуманкасинского, Шатьмапосинского, Юнгинского, Юськасинского, Ярабайкасинского, Ярославского, Александровского, Ильинского, Кадикасинского, Моргаушского, Тораевского, Москакасинского сельских поселений Моргаушского района на 2007 год.

2. Рекомендовать Собраниям депутатов Большесундырского, Орининского, Сятракасинского, Хорнойского, Чуманкасинского, Шатьмапосинского, Юнгинского, Юськасинского, Ярабайкасинского, Ярославского, Александровского, Ильинского, Кадикасинского, Моргаушского, Тораевского, Москакасинского сельских поселений принять проекты бюджетов сельских поселений Моргаушского района на 2007 год в установленном порядке в соответствии с требованиями законодательства Российской Федерации, Чувашской Республики и Уставов сельских поселений.

**Рекомендации приняты участниками публичных слушаний 6 и 7 декабря 2006 г.**

## Вулакана каланă сăмах

### 104-мĕш номер тухрĕ

Çапла, пирĕн вулакан патне çулталăкра район хаçачĕн 104 номерне çитермелле. Çук-ха, халех сывпуллашма шутламастпăр эпир хамăрăн вулаканпа. Тепĕр икĕ эрне хушши пĕрлех пулăпăр.

Çакна çеç аса илтеретпĕр, «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçата çитес çултан илсе тăрас тетĕр пулсан, ăна çак кунсенчех çырăнса илме тăрăшăр.

Çĕнĕ 2007 çулта та пĕрле пулар!

**Райхаçат редакцийĕ.**


**Çырăнтару-2007** **Çитес çул илсе тăма**

***Районти «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçата 2007 çулхи пĕрремĕш çур çулта илсе тăма малалла çырăнтараççĕ. Ултă уйăха çырăнмалли хак – 148 тенкĕ те 26 пус.***

***Ертӳçĕсене район хаçатне ĕç коллективĕсенче вăй хуракансене ведомоçпе çырăнса парассине йĕркелеме ыйтатпăр. Район хаçачĕн редакцийĕ.***